Муркаш район больници 75 çул тултарнă май

Яланах халăх сывлăхĕшĕн ĕçленĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

1934 çулта Муркаш район больницинче пĕрремĕш врач Иван Григорьевич Григорьев ĕçлеме тытăнать. Вăл пĕр çулталăка яхăн вăй хунă, больница заведующийĕн тивĕçĕсене пурнăçланă.

1935 çулхи январь уйăхĕнче Муркаш больницин заведующийĕ пулма Кашмаш ялĕн çыннине, 1915 çулта фельдшер çар ротин шкулне вĕренсе пĕтернĕ Анисим Павлович Иштырганова çирĕплетнĕ. Вăл Муркаш больницинче фельдшерта пенсие тухиччен – 1959 çулччен ĕçленĕ. Ăна чылайăшĕ ырăпа аса илеççĕ. Вăл ачасем те çураттарнă, шăмă сикнине те юсанă, шăтан-юхана та сипленĕ. А.П. Иштырганов 80 çул пурăнса 1975 çулхи декабрь уйăхĕнче çĕре кĕнĕ.

Муркаш больницин пĕрремĕш акушерки Дарья Ивановна Ефремова пулнă. Вăл 1913 çулта Шаптак ялĕнче çуралнă, 1933 çулта Çĕрпӳри медицина техникумне вĕренсе пĕтернĕ.

Хыççăн вара Муркаш больницин заведующийĕсем пулса Нина Николаевна Фадеева тата Елена Ивановна Ефимова ĕçленĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Муркаша эвакуаци йĕркипе Ленинградра пурăнакансене илсе килнĕ пулнă. Вĕсен шутĕнче врач-терапевт Аида Иосифовна Меклер та пулнă. Вăл больница заведующийĕнче 1945 çулччен тăрăшнă, кайран тăван вырăнсене таврăннă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче больница коллективне В.М. Ольховский хирург ертсе пынă. Унăн мăшăрĕ шăл тухтăрĕнче ĕçленĕ. Штатра акушер-гинеколог та пулнă. Çав çулсенчех больницăра аптека пункчĕ ĕçленĕ, унта Арбузов вăй хунă.

1948 çулта аптекăн йывăç çуртне туса лартнă. Ку ĕçсене ун чухне Л.М. Михайлов ертсе пынă тата аптека ертӳçинче те 1975 çулччен ĕçленĕ.

1950 çулта уйрăм йывăç çуртсене ĕçе кĕртсе больницăри койкăсен хисепне 50-на çитернĕ. Ку çулсенче тĕп врач пулса Т.Н. Никитин ĕçленĕ. Тĕп больницăн историйĕнче пĕрремĕш хут вăл ăш-чик операцийĕсене тума тытăннă. Ăна операци сестри Ангелина пулăшнă.

1953–1959 çулсенче больницăн тĕп врачĕ пулса А.С. Буфатин ĕçленĕ. Унăн мăшăрĕ Т.И. Буфатина педиатр пулнă.

Больницăна 60-мĕш çулсеммчен кăмакасемпе хутса ăшăтнă. Медицина ĕçченĕсем вуттине хăйсем хатĕрленĕ. Шывне те çăлтан витресемпе тата пичкесемпе кӳрсе килмелле пулнă. Электричество пулман. Çĕрле операцисене краççын лампăсен çутипе ирттерме тивнĕ.

1960-мĕш çулсен пуçламăшĕнче котельнăй туса лартнă, канализацине шыв пăрăхне хута янă. Электроэнергие талăкĕпех парса тăма тытăннă. Унччен вара ăна каçхи вăхăтра кăна панă пулнă. Ку çулсенче больницăна Н.А. Аршуткин ертсе пынă.

Районта сывлăха сыхлас ĕçе Гордеевсем пысăк тӳпе

хывнă. Виталий Константинович хирург, Людмила Константиновна педиатр пулса ĕçленĕ. Вĕсем 1961 çулта Барнаулти медицина институтĕчне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ĕçлеме тытăннă. Çав çулсенче çуралнă ачасем вилесси чакма тытăннă.

1967-1968 çулсенче амбулаторин йывăç çуртне хута янă. Хыççăнхи çулсенче больницăна В.М. Веселов, Г.Г. Ефремов, П.А. Абрамов, В.А. Ильина ертсе пынă. 1971 çулта ача-пăча уйрăмне райĕçтăвком пулнă çурта куçарнă. Стационарăн кăнтăр енче хирурги уйрăмне йĕркеленĕ.

1975 çулхи майăн 29-мĕшĕнче районти тĕп больницăн 3 хутлă корпусĕн никĕсне хунă. Тĕп врач ун чухне Ятман ялĕнчи акушер-гинеколог В.К. Филиппов пулнă.

1979 çулхи майăн 5-мĕшĕнче больницăра васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмне уçнă. 1981 çултан тытăнса талăкĕпех дежурство тăрассине йĕркеленĕ. Унăн ĕçне Н.Ф. Куликов йĕркелесе ертсе пынă.

1970-мĕш çулсем больницăна вырăнти кадрсем килме тытăннипе паллă. Кусем вĕсем Н.А. Маркова акушер-гинеколог, Н.Ф. Куликов хирург, З.А. Андреева педиатр, Н.А. Кузьмина терапевт, Л.П. Огурцова окулист, И.А. Воробьев, Л.Н. Андреев, Г.М. Огурцов хирургсем. Г.М. Огурцова пĕрремĕш кунсенчен тытăнсах тĕп больницăн тĕп врачĕ пулма çирĕплетнĕ. 1980-мĕш çулсен пуçламăшĕнче тĕп больницăна врачсен çемье мăшăрĕсем ĕçлеме килнĕ. Кусем вĕсем хамăр районти Даниловсем, Васильевсем, Кузнецовсем.

1982 çулта Г.М. Огурцов ертсе пынипе поликлиникăпа пĕрле 180 вырăнлă стационара ĕçе янă. Çавăн чухнех тĕрлĕрен медицина оборудованийĕ чылай туяннă. Больницăра ача-пăча, хирурги, терапи, ача çуратмалли, функционаллă диагностика уйрăмĕсене уçнă.

1982 çулта кунта пĕр мăшăр Басяевсем ĕçлеме килнĕ, иккĕшĕ те педиатрсем пулнă. Елена Михайловнана тĕп врач çумĕ, Владимир Михайловича ача-пăча уйрăмĕн заведующийĕ пулма çирĕплетнĕ. В.В. Виноградов ертсе пынипе вĕсем ачасен вилеслĕхĕн шайне чакарма, педиатри службин ĕçне çĕнĕ шая çĕклеме пултарнă.

1990 çулта, республикăри район больницисем хушшинче пĕрремĕшсен шутĕнче, 3 вырăнлă анестезиологипе реанимаци уйрăмне уçнă. Больницăн пĕрремĕш анестезиологĕ И.А. Воробьев пулса тăрать. Эпир пирĕн больницăра хăйсен професси ĕçне-хĕлне тытăннă тата республика клиникисенче вăй хуракан В.И. Бушуевпа, Ю.В. Александровпа, Е.М. Домановапа тата ыттисемпе чăннипех мухтанма пултаратпăр.

СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔ ШАНЧĂКЛĂ АЛĂРА

2002 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса больницăна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов ертсе пырать. Районта пурăнакан 36658 çын, вăл шутра 7360 ача сывлăхне пăхса тăма тата сиплеме нумай профильлĕ сиплевпе профилактика учрежденийĕн мелĕсем çителĕклĕ.

Районĕпе больницăсенче 254 койка йĕркеленĕ. Вĕсенчен талăкĕпе выртса тăмаллисем 198 койка. Кăнтăрлахи уйрăмрисем 56 койка тата кăнтăрлахи стационар койкисем 29.

Врачсем чирлисене 22 специальноçпе йышăнаççĕ. 86 врач, 275 вăтам медицина ĕçченĕ, пăхса тăракан тата кĕçĕн персонал ĕçченĕсем 276 çын медицина пулăшăвĕ параççĕ. 86 врачран 5-шĕ аслă категориллĕ, 33-шĕ 1-мĕш категориллĕ, 9-шĕ 2-мĕш категориллĕ. Нумайăшĕ медик-практиксен аспирантурине пĕтернĕ. Кусем вĕсем Г.М. Огурцов, Л.Н. Андреев, С.М. Васильев, А.П. Афанасьев, В.А. Прокопьев, Н.Е. Григорьев хирургсем, участокри врач-терапевт А.А. Алексеева, пĕтĕмĕшле практика врачĕ Э.В. Петрова. 275 вăтам пĕлӳллĕ медицина ĕçченĕнчен 94-ăн чи аслă категорие, 66-ăн 1-мĕш категорие, 26-ăн 2-мĕш категорие тивĕçнĕ.

Медицина ĕçченĕсем хушшинче хăйсен хастар ĕçĕпе ырă ят çĕнсе илнисем, районти тĕп болницăн, район администрацийĕн, Чăваш Республикин тата Раççей сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствисен Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсене тивĕçнисем сахал мар.

ÇАМРĂКСЕМ ĔÇРЕ САТУР

2003 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче тĕп врач хушăвĕпе районти тĕп больницăн çамрăксен канашне йĕркеленĕ. Больницăра 49 çамрăк специалист вăй хурать. 2006 çул итогĕсемпе çамрăксен канашĕ «Вĕрентӳ тата социаллă сфера» номинацире

предприятисемпе организацисенче çамрăксемпе ĕçлессине йĕркелесси енĕпе республика конкурсĕнче 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. 2007 çулхи ноябрь уйăхĕнче вара «Социаллă ĕç-хĕл» номинацире республика конкурсĕнче 2-мĕш пулнă.

Вăтам сыпăкри специалистсен професси пĕлтерĕшне, сиплевпе профилактика пулăшăвĕн пахалăхĕпе культурине ӳстерес тĕллевпе 2006 çулта сестра ĕçĕн канашне йĕркеленĕ. Вăл Муркаш районĕнчи пĕтĕм вăтам медицина персоналне пĕрлештерсе тăрать. Унăн ĕçне тĕп медицина сестри М.Ю. Шарапова ертсе пырать.

ЫРĂ ЯТ ÇĔНСЕ ИЛНĔ

Пирĕн врачсем республикăри кăна мар, республика тулашĕнче иртекен практика конференцийĕсене, съездсене те хутшăнаççĕ. 2004 çулта Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн врачĕ В.М. Басяев республикăра пĕрремĕш пулса тăчĕ. Çав çултах Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ республика конкурсĕнче 2-мĕш, Сыпайкассинчи фельдшерпа акушер пункчĕ 1-мĕш вырăнсене тивĕçрĕç.

Юлашки çулсенче районти сиплев учрежденийĕсенче РФ субъекчĕсенчи тата чикĕ леш енчи тĕрлĕрен делегацисем сахал мар пулса курчĕç. Çакă пĕтĕмпех районта сывлăха сыхлас ĕç ăнăçлă аталанса пынине çирĕплетсе парать.

ĔÇРЕ ТЕ, КАНУРА ТА...

Районти тĕп больницăра вăй хуракансем ĕçлеме кăна мар, канма та, спортпа туслă пулма та май тупаççĕ. Темиçе çул хушши больница коллективĕ Муркаш ял тăрăхĕ ирттерекен спартакиадăра çĕнтерсе куçса çӳрекен кубок хуçи пулса тăнă. «Сывлăх кунĕсене», уйрăмсем хушшинчи тĕрлĕрен конкурссене хутшăнакансем сахал мар.

Больница коллективĕ вăхăтпа тан утма тăрăшать. Кунта обществăн социаллă заказне тĕпе хураççĕ – «Чирчĕре сиплессинчен асăрхаттарма çăмăлрах». Çакă вара сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пынине тачă çыхăннă. Сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси, çынсем хăйсен сывлăхĕшĕн ответлăха туйни, чирлессин факторĕсене тупса палăртни тата пĕтерни, диагностика тата вăхăтра сиплев ĕçĕсене туса ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

ВĂХĂТПА ТАН

Çĕр-шыв Президенчĕ аталанăвăн тĕп çул-йĕрĕсене палăртнăччĕ. Ку тĕллевпе сывлăх сыхлавĕ тĕлĕшпе те наци проектне туса хатĕрленĕ. Вăл темиçе пая пайланать: пуçламăш медицина пулăшăвне аталантарасси, ВИЧ-инфекцисен, В тата С гепатитсен профилактики, тупса палăртасси тата сиплесси, хушма иммунизаци, диспансеризаци, хĕрарăмсене çие юлнă чухне тата ача çуратнă чухне медицина пулăшăвĕ парасси.

Юлашки çулсенче пурлăхпа техника бази палăрмаллах çĕнелсе улшăннă. Васкавлă пулăшу службин автомашина паркне тĕпрен çĕнетнĕ. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн района хальхи медицина оборудованийĕсемпе вакцинăсем 10 миллион тенкĕлĕх кӳрсе килнĕ. Юлашки çулсенче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсене 8 уçнă.

Районти тĕп больница тăнăçлă аталанса пырать. Унăн ĕçĕн тĕп çул-йĕрĕсем вĕсем çынсен пурнăç çулне вăрăмлатасси, çынсем вилессине чакарасси, ачасем çуралассине ӳстересси, çынсен сывлăхне сыхласа хăварасси тата çирĕплетесси.

Юлашкинчен вара коллективра ĕçлекенсене больница юбилейĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп, ĕçре ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунатăп.

P.S. Район больници 75 çул тултарнине халаллана уяв мероприятийĕ районти Культура çуртĕнче ноябрĕн 28-мĕшĕнче иртет, 11 сехетре пуçланать. Пурне те хапăл туса кĕтетпĕр унта.

В. ДАНИЛОВ,
районти тĕп больницăн тĕп врачĕ.

Сăн ӳкерчĕксенче: 1935–1959 çулсенче район больницинче А.П. Иштырганов ĕçленĕ; операци бригади кăткăс операци ирттерет.

Тав сăмахĕ

Ăшă сăмаха тивĕç вĕсем

Пурнăç урапи пĕр тикĕс кусмасть. Çулсем иртсе пынă май çыннăн сывлăхĕ те майĕпен хавшать, çавăнпа чирлесси те пулать. Юрать-ха халăх сывлăхне сыхлассипе мал ĕмĕтпе тăрăшнипе тата çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртнипе йывăр чирлекенсенчен ытларахăшĕ тĕрĕс-тĕкел тепĕр хут ура çине тăрать.

Акă нумаях пулмасть эпĕ йывăр чирлесе ӳкрĕм, Муркашри пĕрремĕш номерлĕ больницăри хирурги уйрăмне лекрĕм. Ю.А. Кузнецов хирург операцин аслă сестри С.Г. Алексеева пулăшнипе операцие кĕске вăхăтра турĕ. Ун хыççăн çĕвĕ вырăнĕ чиперех сиплентĕр тесе И.М. Коломенскова тата ытти медицина сестрисем те сахал мар вăй хучĕç. Шурă халатлисем тăрăшнипех ĕнтĕ эпĕ те йĕркеллех сывалса тухрăм.

Больницăран çулсерен миçе çын сывалса тухать пулĕ? Шутласа кăларма та пулмĕ. Халĕ те çак уйрăмра сипленнĕ тапхăрта сывлăх хуралçисем сахал мар пациента тĕрлĕрен операци турĕç.

... Акă кĕркуннехи йĕпе-сапаллă тĕттĕм каç. Çĕрлехи шăплăха пăсса больница умне «Васкавлă пулăшу» машини килсе чарăнчĕ. Кĕçех ун çинчен наçилккапа самаях суранланнă вăтам çулсенчи çынна хирурги уйрăмне илсе хăпартрĕç. Унăн сывлăхне сыхласа хăварассишĕн дежурствари хирургсемпе медсестрасемшĕн каллех яваплă ĕç пуçланчĕ...

Çапла, мĕнле кăна йывăр чирпе выртакан çук пулĕ кунта. Шурă халатлисем вĕсене ура çине тăратас тесе пĕр ĕмĕт-тĕллевпе сиплеме тăрăшаççĕ.

Хирурги уйрăмне Г.М. Огурцов врач ертсе пырать. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнче медицина факультетĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн 1979 çулта Муркашри тĕп больницăра хирург ĕçне кӳлĕннĕ. Пултарулăхне кура ăна 1983 çулта хирурги уйрăмне ертсе пыма шанаççĕ.

Г.М. Огурцов хирург заведующи тивĕçĕсене пурнăçланисĕр пуçне йывăр чирлекенсене е инкек-синкек тӳснисене вăхăтра тивĕçлĕ пулăшу пама С.М. Васильев аслă ординаторпа пĕрле кăткăс операцисем те тăвать. «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» ята тивĕçнĕ Г.М. Огурцов мал ĕмĕтпе ĕçлет тата пурăнать.

Асăннă больницăри хирурги уйрăмĕнче çынсен сывлăхне сыхлас, чирлисене сиплес ĕçсенчи опытлă специалистсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Л.Н. Андреев травматолог тата хирург. Вăл кунта çак ĕçре 30 çул ĕнтĕ.

Леонид Николаевич ĕçри хастарлăха, ăсталăха кунран-кун ӳстерсе пынă. Тăрăшулăхне кура «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ», «Раççей Федерацийĕн сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ» ятсене тивĕçнĕ вăл. Обществăлла ĕçсене те активлă хутшăнать. Вăл – депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

Çак коллективри Ю.А. Корольковпа И.А. Воробьев анестезиологсем, Н.А. Кожевниковпа А.П. Афанасьев хирургсем, ытти сывлăх хуралçисем те пысăк хисепре.

Муркашри пĕрремĕш номерлĕ тĕп больницăна уçнăранпа 75 çул тултарнă май унăн тĕп врачне В.Г. Данилова, çавăн пекех мĕн пур врачсемпе медицина сестрисене, санитаркăсене тата ытти ĕçченсене тав туса çирĕп сывлăх, телейпе вăрăм ĕмĕр сунатăп.

Александр ШАРИКОВ.

Тереç ялĕ.